13-мĕш çул тухать.

# КАПКĂН

№ 17. ОКТЯБРЬ 1939 çул

„Чăваш Коммунĕ“ хаçаткăларать




## Хĕвеланăç Белоруссире

— Ку старик хăйĕн вăрăм ĕмĕрĕ тăршинче мĕн-мĕн тӳссе иртермен-ши, мĕн-мĕн курман-ши?

— Ирĕклĕ çĕршывра Октябрь уявне иртернине кăна курман.

# УЯВ КАҪХИНЕ

Гриша Морозов—хастарлă та пултаруллă ҫамрăксенчен пĕри. Пурнăҫра-и, е ĕҫре-и ăнсăртран тĕл килекен кирек мĕнле йывăрлăха та вăл ҫăмăллăнах ҫĕнтерсе хурать. Икĕ ҫул ытла ĕнтĕ вăл хăйĕн станокĕ ҫинче ĕҫ нормине 150 процентран кая мар тултарса пырать. „Мĕнле-ха санăн нормăсем икĕ хута яхăн тулса пыраҫҫĕ?"—тесе ыйтаҫҫĕ унтан каярах юлнă юлташĕсем. „Ҫаплах"—тет вăл, икĕ норма тултарни ҫинчен мар, пĕр стакан шыв ĕҫесси ҫинчен сăмах пынă пек. Ăна дирекцине чĕнсе илеҫҫĕ те, ҫĕнĕрен панă рационализациллĕ сĕнĕве ĕҫре тĕрĕслесе пăхма хушса яраҫҫĕ. Ăна вăл пĕр-икĕ сменăра тĕрĕслесе ҫитерет. „Мĕнле-ха эсĕ ытла час вĕренсе ҫитетĕн?"—тесе ыйтаҫҫĕ унран юлташĕсем. „Ҫаплах"!—тет вăл.

Пур ҫĕрте те хăюллă ҫӳрет Гриша, япшар чĕлхи-ҫăварĕ пурин кăмăлне те юрама ĕлкĕрет, анчах пĕр тĕлĕшрен унăн хут хулăмĕш хăюллăх та ҫук. Ҫулталăк ытла ĕнтĕ вĕсем ҫамрăк стахановкăпа Нина Рогожкинăпа пĕрне пĕри куҫ хывса пурăнаҫҫĕ. Мĕн тери юратмасть-ши ăна Гриша, анчах кун ҫинчен хĕре куҫран калама мар, хăйĕн ăшĕнче калама та именет. Нинăна курмасан унăн кăмăлĕ мĕн тери вĕрени каламасăрах паллă. Кирек ăҫта,—пухусенче, канашлусенче, докладсенче вăл мĕнле те пулин сăлтав тупса Нина ҫумне йăпшăнса ларать, е кинона, театра ушкăнпа пухăнса кайсан, кирек мĕнле майпа та пулин Нинăпа юнашар лармалли билета илет. Вĕсем вара самантран саманта пĕр-пĕрин ҫине кăмăллăн пăхса илеҫҫĕ, е ăнсăртран чавса, е ура сĕтĕрĕлсен, йăвашшăн каҫару ыйтаҫҫĕ, е каҫару ыйтиччен каҫарма та ĕлкĕреҫҫĕ. Каччă хĕр ҫине, хĕр каччă ҫине тинкерсе пăхса илеҫҫĕ, куҫĕсемпе мĕнпур шухăшĕсене те калаҫҫĕ пулĕ, анчах иккĕшин пичĕсем ҫине те, Мичурин сортлă панулми пек, йĕпкĕм хĕрлĕ тĕс тухать те, малалла нимĕн те чĕнмеҫҫĕ. Тăтăшах Гриша Нинăна хăй ăна ĕмĕрлĕхе юратни ҫинчен пĕр пытармасăр калама хăюллăх пухса ҫитерет, ҫак шухăша ҫавăрса каламалли сăмахсене пухать, анчах Нинăпа тĕл пулсанах, эрне хушши пĕрерĕн-пĕрерĕн пухнă сăмахсем ҫуркуннехи ҫерҫисен кĕтĕвĕ пек чăлпар саланса каяҫҫĕ. Нина та Гришăна асран ҫухатма пултараймасть. Ҫамрăклăхри мĕнпур хĕрӳ юратăвне вăл юратнă каччишĕн тытать, анчах ун ҫинчен сăмах хускатасси... ҫук, ниепле те калас ҫук ĕнтĕ ун ҫинчен куҫ кĕретĕнех.

Ҫапла пĕр эрне, икĕ эрне, уйăх, ҫур ҫул иртет, икĕ ҫамрăкăн юратăвĕ ҫаплипех иккĕшин ăшĕнче пытарăнса тăрать.

„Пӳрни пӳрт умне килет", тенĕ ваттисем. Тен ку сăмаха вĕсем Гриша Морозов пек ҫамрăксене халалласа каланă пулĕ. Пĕр ăнăҫлă саманта пула, Гришăн та пӳрнĕ телейĕ хăйĕн умне пырса тăчĕ.

Заводра Октябрь уявне иртересе тĕлĕшпе ĕҫлекен комисси чаплă вечера мĕнле иртерессе ҫинчен сӳтсе яврĕ.

Комисси членĕсем завком председателĕ Крылов юлташ тавра пуҫтарăнса ларнă, пурте тенĕ пекех ҫамрăксем, пĕр Крылов ҫеҫ сап-сарă сухалне шăлкаласа ларать. Пур пек мероприятисене те пĕр сасăпа ҫирĕплетрĕҫ.

— Ну, ҫамрăксем, маххă ан парăр, праҫник-тĕк чăн-чăн праҫник тумалла. Сире эпĕ, энчен начар иртерсен, хулари ҫамрăксен умĕнче ят сарса ҫӳрĕп,—тет Крылов, куҫ хĕссе.

— Пиртен ан шиклен, эпир талăк хушши чарăнмасăр танцă тума пултаратпăр, а сана вăт хирсе тăратса та ташлаттарас ҫук,—тĕртсе хучĕ пĕр ҫамрăкĕ.

— Эпĕ-и?—сиксе тăчĕ Крылов.—Эпĕ ташлама тăрсан...—темĕн каласшăнчĕ вăл, анчах алăкран комсорг кĕрсе тăнине курчĕ те, калас сăмахне пăрахса ун патне утрĕ.—Чăр тархасшăн ҫак ҫамрăксене вăт ҫынтан кулма,—тет вăл, хăй кулнă май,—ташлама пĕлменшĕн йĕкĕлтеҫҫĕ.

— Ан хуйхăр, эпир санпа иксĕмĕр ташлăпăр,—тет комсорг, ушкăнлă кулла хутшăнса.—Пĕлетĕн-и, Крылов, пирĕн коллективра тата тепĕр событи пулать,—терĕ вăл.

— Мĕнле событи?

— Ну... мĕнле ҫавăрса калас сире, уяв кунĕсенче Морозов авланма шутлать.

— Морозов-и?—Гришăна аса илчĕ Крылов.—Молодец! Вот туй пулать! Вот ача, хĕрсем тĕлĕшĕнчен чĕмсĕр ҫеҫ ҫӳретчĕ, вот халĕ мĕн шут тытнă вăл. Апла пулсан завкомăн тепĕр хваттер хатĕрлемелле пулать. Ҫĕнĕ ҫуртра хваттер парас ăна.

— Ҫавă ҫеҫ кирлĕ пире, ытти пурте хăех пулса пырать,—терĕ комсорг, ĕҫ ҫав тери ăнса пынипе савăннăскер. Морозов Костя патне чупрĕҫ.

Заводри рабочисен, служащисемпе интеллигентсен чаплă пухăвĕ пысăк ҫĕкленӳпе иртрĕ. Парторг доклачĕ хыҫҫăн коммунистсемпе комсомолецсем, стахановецсем нумайăн тухса калаҫрĕҫ, производствăра тата пысăк ҫитĕнӳсем тума сăмах пачĕҫ. Юлашкинчен, стахановецсене премилени ҫинчен пĕлтерме Крылова сăмах пачĕҫ. Чăн малтан Гриша ячĕ тухрĕ, ун хыҫҫăн Рогожкина Нина, унтан ыттисем. Вĕҫĕмсĕр алă ҫупнă сасă кĕрленипе ҫынсен сассисем те илтĕнмеҫҫĕ. Гришăна костюм парса премиленĕ. Пĕрре савăннипе тепре именнипе хĕрелсе кайнăскер, сцена ҫине аран-аран хăпарчĕ, чĕри кăкăртан сиккипе тухса тарас пек тапать. Вăл хăйне пысăк парне панăшăн тав турĕ, малашне тата лайăх ĕҫлеме сăмах пачĕ тата темĕн ҫинчен каласшăн пулчĕ, анчах, алă ҫупнисем тепĕр хут кĕрлесе кайрĕҫ. Крылов ун патне пычĕ, ахаль илтĕнменнипе хăлхаранах калать.

— Ну, тăванăм, ҫамрăк арăм ҫумне ларма юриех ҫак костюма тăхăнса киль-ха,—терĕ вăл.

— Мĕнле арăм?—тĕлĕнсе кайрĕ Гриша.

— Ман арăм ҫумне мар, конечно, хăвăн арăму ҫумне ларма. Ну часрах кайса кил,—терĕ вăл, ун патĕнчен пăрăнса.

— Эпĕ авланмани ҫинчен те пĕлмест пулас-ха,—тесе шутларĕ Гриша, хваттерне кайнă чухне. —Юрĕ, малашне, телей пӳрсен, арăм ҫумĕнче те ларăпăр,—терĕ. „Нина ҫумĕнче" теесшĕн пулчĕ вăл, анчах вăл шухăш таҫта шалалла пытанчĕ.

Ятарласа хатĕрленĕ залăра бал пуҫланмалла. Ҫамрăксем танцăсем пуҫлама хатĕрленеҫҫĕ. Пӳлĕмри сĕтел тавра ларакан ваттисем савăнăҫла калаҫу пуҫласа янă, пĕрне-пĕри кĕрекери ҫимĕҫ-

сене тутанса пăхма сĕнеççĕ, аслă праçник ячĕпе сывлăх сунаççĕ, обязательно çĕр çултан кая мар пурăнма сĕнеççĕ. Хаваслă музыка сасси кăмăла çĕклентерсе ярать.

Гриша алăкран кĕрсенех Нина ăçта ларнине куçпа шырама пикенчĕ. Кăвак пурçăн кĕпе тăхăннă Нина сĕтел пуçĕнче ытти тантăшĕсем хушшинче ларать мĕн.—Кĕçĕр обязательно татăклăнах калатăп,—тесе çирĕп шут тытрĕ Гриша.

Сасартăк темиçе сасă харăссăн кăшкăрса ячĕç.

— Акă вăл хăех килчĕ! Кунта вăл!—теççĕ.

Чăн малтан Крылов чупса çитрĕ, унтан ыттисем. Гриша кунта мĕнле ĕç пулнине ăнланса иличчен, ăна Нина çумне илсе пырса лартрĕç, сĕтел çине чечек çыххисем пырса ÿкеççĕ, пĕр çамрăкĕ Гриша кăкăрĕ çине çеçке лартса хăварчĕ, тепри хĕрпе каччă умне пĕрер бокал лартрĕ.

— Ну вот, халĕ ĕнтĕ вечерăн тепĕр пайне те пуçлама пулать,—тет Крылов.—Чимĕр, юлташсем, бокалсене çĕлелле! Ну, юлташăмсем,—терĕ вăл Гришăпа Нина çине пăхса,—чысăмăр сахал тесе ан ÿпкелĕр. Паянтан эсир пĕрне упăшка, тепĕрне арăм тесе чĕнме пуçлăр. Чаплă кун пĕрлешетĕр, икĕ маттур çамрăксем праçник кĕрекине илем кÿретĕр. Сире эпĕ вĕçĕмсĕр вăрăм кунçул, этем шута илейми пысăк телей сунатăп. Телейлĕ çамрăксене чысласа!

Гришăпа Нина умĕнче шучĕ çук бокалсем йăлтăртатма пуçларĕç. Нина, шалтах тĕлĕнсе кайнăскер, чакăр куçĕсемпе пĕрре Гриша çине, тепре ушкăн çине пăхать.—Эсĕ çакăн пек мыскара тума шутларăна?—терĕ вăл Гришăна.

— Çÿçрен хытă туртса ил-ха,—терĕ Гриша.

— Мĕншĕн?

— Е тĕлĕкре, е чăнах пулнине пĕлем. Хытăрах, тата хытăрах. Ну вот, чăнахах иккен, анчах кам хăтланнине, честное слово, хам та пĕлместĕп,—терĕ вăл Нина çине ăшшăн пăхса.

Тепĕр сехетрен пÿлĕме плановик Морозов Костя хăйĕн арăмĕпе пырса кĕчĕç.

— Эсир те-и?—тĕлĕнсе ыйтрĕ Крылов.—Пĕр мăшăрне тин çеç пиллерĕм, тата тепĕр мăшăрĕ çитрĕ, а пурте авланнă пулсан?..

Ку касхине Морозов Гриша ячĕ ăнсăртран Костя ячĕпе ылмашни çинчен пĕри те асăрхани пулмарĕ пулас, вĕçĕмсĕр савăнăçлă вăйă-кулă çĕнĕрен пуçланса кайрĕ.

Гришăпа Нина çулталăк ытла пĕрне-пĕри савса пурăнчĕç, анчах çак касхине çеç чăн малтанхи хут пĕр пытармасăр, уççăнах, пĕрне-пĕри юратни çинчен каласа кăтартрĕç.

Тепĕр эрнерен заводăн çĕнĕ общежитийĕнчи икĕ хваттерне икĕ çамрăк çемьесем вырнаçрĕç.

**Никита Волков.**



**Шупашкарти гортоп çынни:** Хĕл пирĕн планпа килĕшмесĕрех. Шупашкара çитрĕ. Вăл хăваланипе хамăр сăмсасене ăшăтмалăх пасартан пĕр лав вутă илтĕм-ха.

# ПАН

Çав-çав çĕрте, çав çĕрте, тискерлĕхпе ăссăрлăх пĕрлешнĕ çĕршывра, пан Тăмписский пуранна, тет. Куçне киллентерме куçĕ умĕнче мечкĕ пек çаврака арăмĕ ларнă, тет, чĕрине лăплантарма чавса тăршшĕ чĕлĕмĕ пулнă, тет. Пуранна тет, вăл чаплă çуртра. Унăн çурчĕ хир-хир урлă, вăрман урлă темиçешер çĕр çухрăмран курăннă, тет.

Çак чаплă çуртăн хуçи пан Тăмписский ялан диван çинче ларнă, тет. Унăн пуçĕ тăрринче турат куçлă мачча хăми пулнă, тет. Акă тытăнчĕ, тет, вăл турат куçĕ çине тĕллесе сурма. Пĕрре сурчĕ, тет, вăл—кăмăлĕ çĕкленчĕ, тепре сурчĕ, тет,—ку ĕç темрен те ытларах килĕшрĕ. Темиçе çул хушши аппаланнă хыççăн пĕр йăнăшсăр сурса тивретме вĕренчĕ, тет. Акă пухрĕ, тет, вăл хăйĕн осадник теекен тарçисене:

— Эсир таса поляксем, пухăр пĕтĕм патшалăхри чурасене, эпĕ вĕсене чаплă пурнăç мелне вĕрентем!—терĕ, тет.

Осадниксем сăмсисем çине тăрана-тăрана ўксе, пĕтĕм патшалăха чупса çаврăнчĕç. Вăхăт нумай иртрĕ-и, сахал-и пан килхушшинче темиçе пин çын ротăн, полкăн, дивизин йĕркеленсе тăчĕ, тет. Тытăнчĕ, тет, хай пан патшалăхри çамрăксене вăрçă ĕçне вĕрентме. Мекĕрлене-мекĕрлене мишень çине сурать, тет, вăл. Ытлашши мекĕрленнипе унăн кĕлетки ўснĕ çемĕн ўссе пычĕ, тет, пушă хырăмĕпе пушă пуçне хăмпă пек сарса пăрахрĕ, тет.

Панăн тава тивĕçлĕ тарçисем—осадниксемпе офицерсем тытăнчĕç, тет, пан вĕрентнĕ пек мишень çине сурма. Пин çын харăс сурнă сасăпа курăксемпе тырпулсем хăрса ларчĕç, тет, „пуянлăхпа вăрçа хатĕр“ ятлă суя хутаççисем пăсăк сывлăшпа тулса сарăлчĕç, тет. Сурма вăй ытларах пултăр тесе, поляк ĕççыннисемпе белорусс, украинец хресченĕсен выльăх-чĕрлĕхне, тыррипуллине шăлса тухрĕç, тет, „Пирĕн патшалăх—Европăри вăйлă патшалăх, хамăр патшалăхри халăха чаплă пурнăç туса паратпăр“ тесе сăмаха çаптарнă чух сирпĕннĕ сурчăк çурхи шыв пек юхма пуçларĕ, тет.

Пĕтĕм патшалăх хăмпи кăвакăн-симĕсĕн курнакан пуличчен сывлăшпа тулса çитнĕ çĕре, панăн салтакĕсем мишень çине пĕр йăнăшсăр тĕл сурма вĕренчĕç, тет.

— Тав сире, чыслă поляксем!—терĕ тет вара пан.—Халĕ эсир манăн патшалăха сыхлама тивĕçлĕ чурасем. Тăшман çине пĕр хĕрхенмесĕр сурăр, пильсудчик ялавне çўлте çĕклеме сурчăка ан шеллĕр!

Вара унăн тарçисем патшалăх чиккине сыхлама тухса утрĕç, тет.

Чи кирлĕ ĕçне пĕтернĕ хыççăн, пан Тăмписский Людвига ятлă мечкĕ пек çаврака арăмĕпе уй-хире уçăлса çўреме тухрĕ. Акă вăл пырать пуçне каçăртса, мекĕрленнĕ чух тулнă сывлăш унăн чапне çĕклесе тăрать. Çак чĕререн савăнса утнă вăхăтра унăн куçĕсем ярса пусмассерен çĕкленсе пыракан тусана асăрхарĕç.

— Мĕн ку,—тет пан,—кам манăн çĕршыва тырпул выранне тĕтĕм акнă?

Вара чĕнсе илчĕ, тет, хăйĕн чаплă тарçисене.

— Мĕн пулнă манăн патшалăха?—ыйтать вăл.

— Вăрçă ĕçне сурса хатĕрленнипе халăх пурнăçне юсас сăмахăн тĕтĕмĕ çаврса илнĕ,—тет пĕр тарçи.

— Э-е! Çавна калама пĕлмест. Чĕлхи ытлашши сăмахсем калама вĕреннĕ, парăр ăна икçĕр розга!

Ытти тарçисем кăна курсан хăраса ўкрĕç, тет.

Анчах тарçисенчен чи чеереххи мала тухса:

— Турă ывăлĕ пан,—пуçларĕ, тет, сăмаха,—пирĕн çĕр çине куç ўкнĕ—белоруссемпе украинецсен куçĕ. Çак этемсем çĕр çине пăхса тăраççĕтăраççĕ те, хаш! хуйхăрса çĕр еннелле аллисене сулаççĕ. Пирĕн патшалăха çавăнпа суя сĕрĕмĕ хупăрласа илнĕ пек туйăнать!

— Эппин,—таврчĕ пан,—белоруссемпе украинецсене çутçанталăк çине пăхма чарас!

Панăн шанчăклă тарçисем белоруссемпе украинецсен шкулĕсене, больницисене хупма тухса чупрĕç. Вара çак халăхсем пĕр самантра куç умне хунă буквăна та курайми пулчĕç.

— Эсир чăн-чăн поляксем! Сиртен паха салтаксем çĕр çинче çын курман,—терĕ, тет, пан.

Çак сăмахсем ытлашши килĕшнĕрен пан хăй те, унăн тарçисем те тепĕр хут мекĕрленсе панăн пултарулăхне кăтартма пуçларĕç, тет.

Пĕр ăшă кун панăн мечкĕ пек арăмĕ Людвига хăйĕн хĕрарăм тарçисемпе пахчана уçăлса çўреме тухрĕ. Акă пырать вăл шăнкăртатса выртакан шыв хĕррипе. Чи илемлĕ каччăсемпе илемлĕ пурнăç çинчен шутласа пынă вăхăтра малалла тинкерсе пăхрĕ, тет, вăл.

— Пан!—çухăрать вăл,—Пан!

Хăйĕн тарçисене ертсе пан Тăмписский чупса çитет.

— Мĕн пулчĕ, пани Людвига?—ыйтать вăл.

— Вон-вон!—кăтартать пани мал енне.

Пăхать те пан, хытсах каять. Çырма леш енче пĕр çын йывăç çумне хутланса ларнă та, вилсе кайма та вăтанман!

— Вилес умĕн мана асăннă-и вăл? Çĕр çинчи пурнăç илемĕ „пан“ тенĕ-и вăл,—ыйтать пан тарçисенчен.

Чеерех тарçи мала тухать те:

— Вăл белорусс çынни, „пан“ сăмаха каланă чух унăн хăсăк тухать те, „пан“ теме йĕрĕнет вăл!

Панăн сăнĕ автан кикирикĕ пек хĕрелсе кайрĕ. Вара „чыса“ пĕлмен белоруссемпе украинецсене, хăсăк ан тухтăр тесе, çиме сахал пама хушать. Вĕсене сăнчăрласа тĕрмене хупма, пуçран резина патаксемпе çапма вĕрентсе ярать.

Пан хушнипе нумай-и, сахал-и ĕçлеççĕ тарçисем—пĕтĕм çĕршыва куççуль витсе илет. Ирхи илемлĕ сывлăм выранне куççуль чечексем çине витĕннине курнă пан тарçисене пухать те:

— Çав белоруссемпе украинецсен йĕрме вăхăт пур пулмалла. Ĕçлеттерес вĕсене: лаша выранне кўлес, ĕне выранне сăвас, сысна выранне вутра ĕнтес, йытă выранне çĕрĕпе вĕрме хушас!

Пан сăмахĕсене итленĕ тарçисем патшалăхĕпех саланчĕç. Тытăнчĕç вара вĕсем ĕçе, мекĕрлене-мекĕрленех панăн „ылттăн“ сăмахĕсене пуçтарнăран киревсĕр сывлăш кăларма пуçларĕç. Киревсĕр сывлăшпа „чап“ ятлă хăмпу татах хăпарса кайрĕ.

„Чап“ хӑмпи хӑпарса ҫитсен, пан тарҫисене каллех хӑй патне пухрӗ.

— Таса поляксем,—терӗ вӑл,—хамӑр чапа татах ӳстерес май сурса пӑхар-и ют ҫӗрсем ҫине!?..

Ҫакна калама ӗлкӗрчӗ-и пан, ӗлкӗреймерӗ-и—Хӗвеланӑҫӗнче ҫил-тӑвӑл пуҫланчӗ: пӑшал сассисем янӑратӑҫҫӗ, тупӑсем кӗмсӗртетеҫҫӗ, пӗлӗт ҫинчен бомбӑсем ҫӑваҫҫӗ... Панӑн тава тивӗҫлӗ тарҫисем, „вӑрҫа хатӗр“ ятлӑ суя хутаҫҫисене пӑрахсах, тарма тытӑнаҫҫӗ. Мекӗрленчӗ пан, мекӗрленнипе хӑмпӑвӗ шартлатсах ҫурӑлчӗ. Ҫурӑлнӑ хӑмпӑвӗнчи сывлӑшӗ пӗтӗмпех тухса пӗтрӗ те, пан хӑй ларнӑ вырӑна пӑрахсах, ҫын курасран хаклӑ йышши „кӗрӗк пӗркенсе“ Румыния еннелле вӗҫтерчӗ. Пан, хӑйӗн тарҫисене пулӑшас чухне, ура тупанӗсене ҫеҫ кӑтартса хӑварчӗ. Ҫав паллӑ вӑхӑтра хӗвел тухӑҫӗнчен пан пусмӑрӗ айӗнче сывлайми пулнӑ украинецсемпе белоруссене ҫӑлма Хӗрлӗ паттӑр ҫӗкленчӗ, панӑн тарҫисене вӑл тапа-тапа сирпӗтсе кӑларчӗ те хӑйне хавасланса кӗтсе илнӗ украинецсемпе белоруссене ирӗке кӑларса ячӗ. Халӗ пан пусмӑрӗ айӗнче пулнӑ халӑхсем пурте ирӗклӗн сывласа, ҫӗнӗ пурнӑҫпа пурӑнма пуҫларӗҫ.

„Хӗвелӗмӗр Сталин!“ теҫҫӗ вӗсем хӑйсен тулли хавасланӑхпа шӑранакан ҫӗнӗ юррисенче.

**И. Кашлинке.**

---

## МАКАР СИДОРОВИЧ

Манпа юнашар утса пыракан Макар Сидорович сасартӑк чарӑнса тӑчӗ те:

— Кӗҫӗн урама тухар-и?—терӗ мана.

— Ма?—терӗм эпӗ.

— Унта урна пур. Пирус тӗпне урна ӑшне пӑрахас. Урама пӑрахас мар.

Эпӗ кулса ятӑм.

— Кулма кирлӗ мар. Эпӗ пирус тӗпӗсене ҫӗре нихӑҫан та пӑрахман. Культурлӑ ҫын пулса ялан урна ӑшне пӑрахнӑ вӗсене,—терӗ мана. —Ҫӗнӗ йӑла ҫинчен калаҫатпӑр хамӑр. Ӑҫта вара вӑл ҫӗнӗ йӑла? Ҫакӑнта ӗнтӗ.

— Акӑ сана валли урна. Пирусна сӳнтерсе пӑрахах ӗнтӗ. Эпӗ санӑн „ҫӗнӗ йӑлуна“ курса киленсе юлам.

Макар Сидорович пирус тӗпне пӑрахрӗ те пӗшкӗнсе урна ӑшне пӑхрӗ.

— Нумаях пухӑнайман-ха,—терӗ.

— Юрӗ-ҫке,—терӗм ӑна.—Ыран тата килсе пӑрахӑн.

Кӑштах кайсан хайхинчен ыйтрӑм эпӗ:

— Эсӗ ҫӗнӗ йӑла ҫынни вырӑнне хуран хӑвна. Кала-ха: пирус тӗпӗсене урна ӑшне пӑрахнисӗр пуҫне эсӗ ҫӗнӗ йӑла валли тата мӗн-мӗн туса пыратӑн?

— Сивӗре учрежденисемпе магазинсен алӑкӗсене хупса ҫӳретӗп. Магазинсенче касса умӗнче темиҫе ҫын пулсан, ачаллӑ арӑмсене хамран малтан тӳлеттеретӗп...

— Ҫавна тунине ҫӗнӗ йӑла вырӑнне хуран эсӗ. Ҫӗнни сахал-ҫке вӗсенче.

— Тата эрех ӗҫместӗп,—хушса хучӗ Макар Сидорович.—Виҫӗ ҫул ытла ӗҫме пӑрахни...

Макар Сидорович татах хушса каласшӑнччӗ, анчах продуктӑсем сутакан магазинран ҫынсем тухнине курсан, шӑпах пулчӗ.

— Мӗн пулчӗ сана?—ыйтрӑм эпӗ хайхинчен. Ҫӗнӗ йӑла ыйтнине...

— Итле-ха,—терӗ мана вӑл. —Сан укҫа пур-и?

— Пур-ҫке.

— Пӗр хӗрӗх тенкӗ памӑн-ши? Хамӑн килех юлнӑ. Ыран тавӑрса парӑп.

— На ал тенкӗ.

— Пӗр 10 кило супӑнь илсе хурас. Тул ҫӑнӑхӗ килнӗ пулас. Темиҫе пӑт туянас.

— Ма ун чухлех? Санӑн ку та ҫӗнӗ йӑла пулать-и-ха?—терӗм эпӗ хайхине. Макар Сидорович именчӗ, тутине хупласа ӳсӗрсе илчӗ те

— Запаслӑх,—тесе хушса хучӗ.

Анлантӑм вара эпӗ унӑн „культурӑллӑхне“.

**М.**

## НАЧАР ВИТЕРЕ

Н. Сверчков ӳкерчӗкӗ



— Сыснасем хӗл ҫывхарнине сисеҫҫӗ пулмалла. Пӗрене хушӑкӗсенчен пӑха пуҫларӗҫ.

# КОМЕДИ

Репетици пуҫланиччен ялти драмкружок руководителӗ Якку Ват асанне патне кӗрсе курас терӗ. Мӗнле-ха, репетицине хатӗрленет-и вӑл?

Крыльца алӑкне уҫса ӗлкӗриччен ӑна хирӗҫ асанне ывӑлӗн ачи Эверкке чупса тухрӗ.

— Ҫта каян, Эверкке?—терӗ Якку.

— Ниҫта та каймасп. Сана мӗн кирлӗ?—терӗ ӑна Эверкке.

Ҫарапуҫӑн тӑракан ача ҫапла калаҫни драмкружок руководительне тӗлӗнтерсех ячӗ. Пӗтӗм ялшӑн хисеп, мухтавлӑ ят пулса тӑракан асанне ҫуртӗнче ӑна нихӑҫан та ҫакӑн пек сӑмахсемпе йышӑнман.

— Асаннӳ килте-и?—терӗ вӑл ҫапах та, ҫамрӑк ачан сӑмахӗсене йывӑра илмесӗр.

— Пӳшӑ мар вӑл... э, мӗн... чирлӗ!—пӑтрашӑнса илчӗ Эверкке.

— Мӗн?!

— Чирлӗ тетӗп, хӑлхасӑр-им эс!—терӗ те Эверкке, алӑка ват ҫын пек хупса хӑварчӗ.

Якку пӗр вӑхӑта аптраса тӑчӗ. Мӗнле-ха капла: уяв ҫитет, спектакль лартмалла, Ват асанне чирлӗ? Ӗненме хал ҫитмелле мар! Ват асанне, самӑй кирлӗ роле выляканни, чирлех пулсан, вӗсен спектакль лартасси пулмасть. Мӗнле-ха капла?

Вӑл кӗме тӑчӗ. Алӑкне шалтан питӗрсе хӑварнӑ. Шаккарӗ. Эверкке чупса тухрӗ.

— Кӳрт-ха, Эверкке!

— Итле-ха, Якку тете,—терӗ Эверкке шалтан,— эсӗ кайран кил. Халь кӗме юрамасть.

— Мӗн тума?

— Халь асанне чирлӗ.

— Кайран чӗрӗлет-им вара?

— Ҫук. Э, мӗн... халь вӗсем... э, мӗнччӗ-ха?.. Халь асанне чирленӗ, атте ӑна пӑхать.

— Мӗнпе чирленӗ? Мӗн ыратать тет?

— Пӗлместӗп. Темӗнле, ӑш чирӗпе чирлемелле тет-и ун.

— Мӗнле чирлемелле тет?

— Ара, кирлӗ пулнӑ та чирленӗ ӗнтӗ,—терӗ те Эверкке, тек калаҫса тӑмарӗ.

— Тьфу!—тесе юлчӗ Якку.—Мӗнле ӑнланмалла кӑна: ҫынсем кирлӗ пулнипе чирлеҫҫӗ? Ман шухӑшпа, кирлӗ пулнипе чӗрӗлме ҫеҫ юрать.

Вӑл, ӗҫ тухманнине пула, крыльца ҫинчен анчӗ те репетици пулмалли ҫӗре утрӗ. Унта кружок членӗсем пуҫтарӑнма тытӑннӑ. Яккуран Ват асанне чирлӗ тенине илтсен, пӳлӗмре хуйхӑллӑ сасӑ илтӗнчӗ.

— Хытах чирленӗ-и?

— Каяс ун патне. Пире курсан унӑн чӗри лӑштах кайӗ,—терӗҫ драмкружок членӗсем.

Якку тӑчӗ.

— Вӑл пире курнипе чӗрӗлес ҫук,—терӗ вӑл.— Кунта урӑххи кирлӗ. Пиртен пӗри тухтӑр илме каяс пулать.

— Ват асанне пирӗн кружокӑн чысӗ, мухтавӗ, чапӗ!—терӗ пӗри.—Эпӗ уншӑн таҫта кайма та хатӗр.

— А эпӗ мӗншӗн хатӗр мар? Эпӗ мӗншӗн каймӑп?—терӗ тепри.

— Уншӑнах шӑпа ярса тӑмӑпӑр. Тухтӑр патне Мӗкӗте каять,—терӗ Якку, малтанхи юлташ ҫине кӑтартса. Мӗкӗте ҫавӑнтах тухса кайрӗ.

— Мӗнпе чирленӗ-ши?—терӗҫ драмкружок членӗсем, ларсан-ларсан.

— Тупнӑ вӗт чир: ӑш ыратнипе чирлемелле пулнӑ тет.

— Мӗнле пулнӑ тет? Хӑй ирӗкӗпе чирлемен пуль ӗнтӗ?

— Тӗлӗнмелле,—терӗ пӗри тӑчӗ те.—Унӑн спектакльте те ӑш чирӗпе чирлемелле вӗт-ха? Хӑйӗн рольне выляна пекех.

— Эх, унччен чӗрӗлсенччӗ вӑл, вара хӑйӗн рольне мӗнле лайӑх калаӗччӗ!

— Шӑл йӗмесен те юрӗ!—терӗ Якку.—Тен, вӑл вилсе кайӗ. Мӗнле хуйӑх пулать вара пирӗн... Ҫук, ӑна чӗртмесен юрамасть, чӗртетпӗр ӑна эпир!

Драмкружок членӗсем Ват асанне патне тухса утрӗҫ. Крыльца умне 7—8 ҫын пуҫтарӑнса тӑнӑ. Ват асанне чирлӗ тенине илтсе килнӗ вӗсем. Кашнин пичӗ ҫинче салхулӑх. Вӗсен хушшинче аслатисӗр ҫӑмӑр хупӑрласа килнӗ чухнехи пек.

— Ан хуйхӑрӑр, тухтӑр илме ятӑмӑр!—терӗ вӗсене Якку.

— Тухтӑр илме?—терӗ вӗсенчен пӗри.—Ун патӗнче ахаль те тухтӑр пур.

— Мӗнле тухтӑр?—тӗлӗнсе карӗҫ драмкружок членӗсем.—Хӑшӗ?

— Ҫӗнӗскер пулмалла, эпир палламастпӑр.

Эверкке ҫаплах яхӑнне те ямасть. Урампа иртекен ҫынсем пурте асанне килӗ умӗнче чарӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри те пӗчӗк ача хӳтӗлесе тӑракан „крепоҫа“ ҫӗмӗрсе кӗреймеҫҫӗ, асаннене курса, ӑна ӑшӑ сӑмахсем каласа чунне пусарай-маҫҫӗ. Арҫынсем аптраса тӑраҫҫӗ, хӗрарӑмсем куҫӗсене шӑлаҫҫӗ.

— Ох, мӗн тӗрлӗ асанне!

Драмкружок членӗсем вӑрттӑн-хӗрттӗнленсе чӳречерен пӑха-пӑха илеҫҫӗ. Ват асанне чӑнах та чирлӗ, вырӑн ҫинче халсӑрланса выртать. Тухтӑр ӑна кӑкӑрӗнчен итлет, алтымарне тыткаласа пӑхать. Асанне ахлатса ярать те унӑн сасси пӗтӗм чуна кайса тивет, тухтӑр ӑна лӑпланма ыйтса ҫемҫен калаҫать. Асаннене мӗн чул чирлӗ мар тӑвас тесен те пурте чӑнах та пек, ӑна чирлӗ мар тесен ниҫтан та ӗненме ҫук.

Якку асаннене ҫывӑххах чӳречерен пӑхас тесе, пахчана кӗрсе кайрӗ. Чӳречи питӗ ҫӳлӗ. Вӑл уриаллисемпе унтан кунтан тӗренкелесе аран-аран кармашса пӑхрӗ те ҫавӑнтах калт! кайса ҫӗре персе анчӗ. Мӗн пулчӗ ӑна? Кам тӗртсе ячӗ?

Никам та тӗртсе яман. Анчах, мӗн те пулсан пулнӑ.

— Якку, тухтӑр килчӗ!—терӗҫ ҫав вӑхӑтра.

— Тухтӑр, тухтӑр та-ха кунта...—тесе, йӑваланса выртать Якку. Хӑй ахӑлтатса кулать.

— Ухмаха ертӗн-ем?—терӗҫ ӑна.—Асанне вилет тесе савӑнатни?

— Ҫук, вилмест тесе савӑнатӑп!—терӗ Якку.— Чимӗр-ха, шӑп! (Пӳртре ҫакӑн пек калаҫу пуҫланнӑ).

— Ну мӗнле пек?—ыйтнӑ асанне.

— О, питӗ аван тухать!—тенӗ ывӑлӗ Сергей.— Якку савӑнсах каять ӗнтӗ куншӑн.

— Каяс, пуҫтарӑнса ҫитрӗҫ пуль,—тенӗ иккӗш те.

Якку пахчаран тухрӗ.

— Ан шавлӑр!—терӗ вӑл.—Халех комеди пуҫланать, трагеди пӗтрӗ.

Крыльца алăкĕ яр уçăлса карĕ. Халăх умне тирпейлĕ кăна тумланнă карчăк тата унăн ывăлĕ Сергей тухса тăчĕç. Çакăн хыççăн урамра пĕр çил шавласа тăни çеç илтĕнчĕ.

— Каларăм вĕт эпĕ сире, унăн спектакльре те ăш чирĕпе чирлемелле терĕм,—тесе хучĕ драмкружокăн пасăр та çак сăмахсене калинă членĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку!—терĕ пуринчен те ытларах тĕлĕннĕ асанне.

— Çакă-и сирĕн вилес карчăк?—терĕ унтан та ытларах тĕлĕннĕ тухтăр.

— Эпĕ и вăл вилес карчăк?—терĕ асанне.— Шухăша та илмен.

— Мĕнпур айăпĕ Эверкке çинче,—терĕ Якку.— Асанне, çапах та мĕншĕн хăратрăн эсĕ пире? Эверккене мĕншĕн хăвна чирлĕ теме хушрăн?

— Епле капла хама чирлĕ теме хушнă!—ик пĕççине шарт! çапрĕ асанне.—Эверкке, мĕн хăтланатăн эсĕ, ачам?

— Хăвăра кашни репетици тумассерен çынсем кансĕрлеççĕ те,—терĕ хыçалта пытанса тăракан Эверкке,—çавăнпа каларăм эпĕ.

— Уйт!—терĕ ăна ашшĕ. Эверкке тĕпĕртетсе кĕрсе кайрĕ.—Ах, мур ачи!

— А тухтăру çта сан, хай, эпир паллайманни?— ыйтрĕç халăхран.—Эпир кунта тепĕр тухтăр илсе килтĕмĕр. Репетици тума мар та.

— А, юрать,—терĕ асанне.—Пире вăл, ан кÿрентĕр те, тухтăр рольне лайăхрах кăларма пулăшĕ. Анчах малашне ун пек хăтланас мар, эпĕ халь тепĕр çĕр çулне ирĕккĕнех пурăнатăп.

— О-хо-хо, эсĕ, асанне, иртсе каймăна ун чул пурăнсан?—терĕç шÿт туса.

— Çук, çук. Халь мана „ăш чирĕпе трук чирлесе ÿкнĕскерне“, ак çак „тухтăр“,—терĕ асанне, Сергей çине кăтартса,—хуларан самолетпа килсе „чиртен“ хăтарчĕ. Ун чухне тата темле машинăпа килсе çăласси пур-ха, вилместĕп.

Репетици тунă çĕре асаннене „çăлма“ илсе килнĕ тухтăра та илсе кайрĕç. Вăл, ялти драмкружокăн çитĕнĕвĕсене курса, хĕпĕртесех ÿкрĕ. Тухтăр рольне кăштах кăларайман Сергее нумай кăтартусем парса хăварчĕ.

— Уяв касхине пирĕн спектакле курма кил!— тесе ячĕç ăна.

— Килетĕп, килетĕп,—тесе кайрĕ тухтăр. Асаннене нумай кунçул сунса хăварчĕ.

**Яккупа пĕр тăван.**

## ТАКМАКОВ БРИГАДИР КУРСА ÇӲРЕНИ

Ку ĕç сентябрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче Комсомольски районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра пулса иртнĕ.

Ирхине ирех сăмăр чашлаттарма тытăннă. Çавăнпа Такмаков бригадир ним тума аптăраса правленинче темĕнччен сĕнксе ларнă.

„Вот мур çанталăкĕ,—тенĕ вăл,—ман йĕтем çинче темĕн чул тырă сапаланса выртнине пĕлмест вĕт“. Юлашкинчен, конюхсен пÿртне калаçса ларма тесе тухса утнă вăл. Вите хапхинчен кĕрес чухне карташĕнчен ăна тĕлĕнмелле сасăсем илтĕнсе кайнă.

— Тпру! Тпру-у! Стой! Уç часрах!— кăшкăрашнă шалта. Унччен те пулман, хапха уçăлса кайнă та, шалтан виçĕ лаша кÿлнĕ урапа сăмăрпа шĕвелнĕ пылчăка сирпĕнтерсе тухнă.

—„Тăле-лют тайлум-тайлу-ум...“—тесе юрласа пынă урапа çинче Молокин конюх.

— Мĕн пулнă кăна?—тесе ыйтнă Такмаков.

— Кам пĕлет ăна, кÿлчĕ те тухса кайрĕ,—тенĕ пĕр конюхĕ.—Лашине шыв та паманччĕ-ха паян.

— Вара мĕнле-ха капла, кам хушнă ăна паянхи кун колхоз лашисемпе кустарса çÿреме? — тĕлĕнсе кайнă Такмаков.

— Хăй аллинче вĕт, кам хуштăр ăна!—тенĕ конюх

Такмаков председателе жалоба пама правленине тухса утнă. Сăмăр чашлаттарнă, çĕре ÿкекен тумламĕсем, Такмакова йĕкĕлтенĕ пекех, темиçе тĕрлĕ сасă кăларса вылянă.

Председателе чылай кĕтсе ларнă вăл правленире.

— Председатель ма килмест паян?—тенĕ вăл, юлашкинчен, правленинче урай шăлса тăракан хĕрарăма.

— Паян вăл ĕçкĕре пулмалла таçта,—тенĕ хĕрарăм.

— Ĕçкĕре? Колхозра ĕççем хĕрсе пынă чухне вăл ĕçкĕре çÿрет-и?—тĕлĕннĕ татах Такмаков.

— Мĕн тĕлĕнен уншăн, паян кăна мар вĕт? Паянхи сăмăрпа тата ĕçĕ те хĕрес çук, çавăнпа пыр шăтăкне хĕрт луччĕ.

Хĕрарăм калаçни Такмакова килĕшсех кайман. Йĕпе çанталăк çан-çурăма йывăрлантарнă. Вăл пĕрре киленсе кайиччен каркаланса анасласа илнĕ те килне тухса утнă.

Унăн çулĕ йĕтем урлă выртнă. Пынă Такмаков сăмăр айĕнче хутланса. Сăмăр шывĕ пур çĕртен те витсе ÿте-тире çÿçентерсе илнĕ. Уттине хăвăртлатнă вăл. Часрах киле çитсе ÿкесси çинчен çеç шухăшланипе, вăл мĕнпур тĕнчене манăçа хăварнă. Çав вăхăтра тем пулнă ăна, вăл темĕскер чĕрĕ япала çине такăннă та пылчăклă шыв ăшне кĕрсе ÿкнĕ. Уншăн инкек пулса тăнă пĕчĕкçĕ чĕр-чун ун урисем айĕнчен çухăрса тухса тарнă.

— Мĕн шуйттанĕ ку!—тесе тарăхнă Такмаков. Çавна пĕлес тесе, вăл каялла çаврăннă та сысна çури сăмăра тÿсеймесĕр çухăрса ял еннелле пынине курнă.

Такмаков бригадир саланса выртакан ыраш кĕлтисем çине такăнса ÿкнĕ те кĕлтесемпе хÿптĕрленсе выртакан сысна ун айĕнченех тухса тарнă. Сысна сасартăк тухса кайнипе бригадир ик-виçĕ хут çĕклене-çĕклене ÿкнĕ.

Çапла хĕн-хур курса пĕтнĕ çав кунхине Такмаков. Ун бригадин йĕтемĕ çинче темĕн чухлĕ кĕлте сăмăрпа шÿсе выртнă. Кĕлете кĕреймен çапнă кантăр вăрри шÿсе ĕлкĕреймен, ăна сыснасем çисе янă пулнă.

Яла кĕрсен унăн тепре тарăхмалла пулнă. Ыт аван утса пыраканскер çине труках шапăр! пылчăк сирпĕтсе хăварнă. Виçĕ лаша кÿлнĕ урапа темĕскер пек иртсе пынă урам хушшипе. Урапа çинче Молокин конюхăн ĕнĕрлесе пынă сасси илтĕннĕ.

— Вот хирлен!—тенĕ Такмаков.—Кун çинчен пĕрре правленинче лартмалла пулать.

„Вăрман хĕрринчи курăнать те, сăмса айĕнчи курăнмасть“ тенĕ пек, çынăн айăпне курнă Такмаков, хăйĕнни çинчен çапах та шарламан.

**Иван.**

# Мĕн мĕне пĕлтермест?

** СЕНТĔР районĕнчи „Восток“ колхозăн иртнĕ хĕллех тиесе килнĕ минерал çăнăхĕсем кăçал çу каçиччен амбарта выртни асăннă колхозăн çĕрĕ çемçетмесĕрех лайăх пулнине пĕлтермест.

** Шупашкарти пединститут столовăйĕ начар ĕçлени çинчен редакцине пĕр кунта 5 çыру килни институт директорĕ çав столовăйра апатланнине пĕлтермест.

** Шупашкарти гостиница тата Хресчен çурчĕн столовăйĕсенче пĕчĕк кашăк, стакан, вилкăсемпе çĕçĕсем çителĕксĕр пулни çав япаласем магазинсенче çуккине пĕлтермест.

** Тури Сăнарти (Советски р-нĕ) „Çĕнĕ пурнăç“ колхозăн тăмран тунă лаша вити ишĕлсе анма тытăнни вите тахçантанпа ларса кивелнине пĕлтермест, витине туса пĕтерменнине тата тăррине витменнипе ăна çăмăр шывĕ шўтерние пĕлтерет.

** Октябрьски районри „Ударник“ колхозăн йĕтемĕ çинче кĕлтесене типĕтме карта туса хурса нумайччен çапмасăр тăратни тата хирти улмине юр çусан та кăлармасăр выртарни „Ударник“ колхозăн руководителĕсем ударлă ĕçленине пĕлтермест.

** Мăн Шетмĕ ялсоветĕнчи (Трак р-нĕ) больницăри врачсем Мăн Шетмĕри шкула вĕренў çулĕ пуçланнăранпа та пырса курманни больница урăх ялсовета куçса кайнине пĕлтермест.

** Етĕрне хулине благоустройство тума кăçал панă 52 пин тенкĕ укçаран 36 пинĕпе çеç усă курни, Çĕрпў хулин урамĕсене сарса тухма панă укçаран 34 пин тенкине урăх çĕре яни çак икĕ хула благоустройство тĕлĕшпе ăмăртса ĕçленине пĕлтермест.

** Чăвашсоюзпа Чăвашторг хăйсене килнĕ таварсене пристаньрен илсе каймасăр уйăхĕ-уйăхĕпе выртарни тата таварсене пăхса усранăшăн вĕсем темĕн чухлĕ штраф тўлени çак организацисен укçисем ытлашшине пĕлтермест.

** Ишлей районĕнчи „Çĕнĕ пурнăç“ колхозра сурăх ферми валли тăвакă çул каялла тума шухăшланă вите йывăççисем таçта сапаланса пĕтни çав йывăççене чун кĕнине пĕлтермест.

** Шупашкар пристанĕ кăçалхи навигацире хăйĕн заданине пĕлтĕрхи чул та тултарайманни Атăл шывĕ кăçал пĕлтĕрхинчен сахал пулнине пĕлтермест.

** Шупашкарти пекарнясем хура çăкăра юлашки вăхăтра тăм пек тачка пĕçерни вĕсем кăçалхи тăхăр уйăхри плана 48 процент çеç тултарнă Энĕшпусĕнчи кирпĕч завочĕ валли сырье туса пама тытăннине пĕлтермест.

## ВАН-ТĔВЕН

### Вăтанакан мулкач

Çĕмĕрле вăрманĕ. Ватă юман айĕнче икĕ мулкач. Вĕсем çапла калаçнăн туйăнать пире:

— Куратăн-и, тусăм, темиçе çын çулпа килнине,—тет пĕрремĕш, ватăраххи.—Вĕсем Çĕмĕрлери „Труженик“ эртелĕн вăрман касакан бригада членĕсем пулаççĕ, вăрман касма кулленех 8 километртан çўреççĕ.

— Вара?

— Шутсăр ывăннă вĕсем. Ывăннăскерсем, ĕçленĕ участокра пурăнмалли çурт-йĕр туса паманшăн председателе вĕсем лайăх мар сăмахсем каласа вăрçĕç.

— Вара?

— Эсĕ çамрăк мулкач. Сана вăл сăмахсене илтни килĕшмест. Çавăнпа эсĕ, вĕсем пирĕн тĕле çитес умĕн, хăлхуна хăвăн малти урусемпе хупласа лар, — юрать-и?

### Лермонтов сăвви

Васкассипе Анат Ачак (Советски р.) избачĕсем вулав çуртĕнче ним те ĕçлемеççĕ. (Çырусенчен).

— Сирĕн Анат Ачакри Андриянов избач Лермонтов çырнă сăвăсенчен хăшне ытларах юрататъ?

— „Казаксен сăпка юррине“. Сирĕн тата?

— „Тĕлĕк“ сăвва.

### Телейлĕ çамрăксем

— Эсĕ генерала курни?

— Курнă.

— Суян! Курман.

— Курнă.

— Курман.

— Ăçта курнă?

— Колхоз театрĕ лартса панă спектакльте.

### Хула совечĕн пĕр членĕпе калаçни

— Шупашкартан тухса каймалли çулйĕр начар пирĕн. Аялти урама чул сарса пĕтермен. Йĕпесапа çанталăкра машина мар, лаша та ашса тухаймасть. Урамра кўлленсе тăракан шывсенчен таксăнах хăтăлма вăхăт.

— Уншăн пире ан айăплăр.

— Ма сире айăпламалла мар?

— Эпир наказра каланисене çеç пурнăçа кĕртсе пынă. Кўлленчĕксем çинчен унта асăнман.

### Тракра

— Чирлĕ эпĕ. Температура хăпарса кайнă ман.

— Апла пулсан культура çуртне кайса лар. Унта чăтма çук сивĕ, температуру лăштах анса ларĕ.

## Арман пӳртӗнче

— Стена ҫинчи тусана ма шăлмастăн? Эсӗ шăлма тивӗҫлӗ ăна.

— Шăлма юрамасть пуль, терӗм.

— Ма?

— Хамăрăн колхозри культурник тусан ҫийӗн пӳрнипе лозунг ҫырса хăварнă. Ав вула: „Тасалăх — сывлăх валли кирлӗ“, тесе ҫырнă.

## Почтăра

— Ай-уй, сан посылку нариклатать тем? Мӗн вăл?

— Сысна ҫури. Хунчăкам патне яратăп. Ăратлăскер.

— Чӗрӗ выльăха йышăнмастпăр.

— Вилнине хунчăкам йышăнмасть.

Хăшпӗр колхозсем пӗрер ӗне илнипех «Ӗне ферми уҫрăмăр» тесе отчет тăратаҫҫӗ.



— Пăх-ха, ферма тухса кайнă.
— Мӗнле ферма пултăр, ӗне вӗт вăл?
— Ҫапла та, пирӗн колхоз правленинче пӗр ӗнене ферма теҫҫӗ.

# Сутăн илнĕ иннек

— Ăçта мура кайса çухалчĕ пулать ĕнтĕ ку, нимне каламасăр тухса кайрĕ те халь те çук? Арçын тесе пурăн вĕт ĕнтĕ çавна, çумĕнчи арăмĕнчен сăмахне пытарса çӳрет те, эй-яй-яй!—тесе калаçса илчĕ пĕр каçхине Кăпитун арăмĕ.

Кăпитун никама систермесĕр тухса кайнă та виçĕ кунтанпа таврăнман. Виçĕмкун вăл лавкана шăрпăк илме кайрĕ. Çавăнта вăл хăйĕн кӳрши Энтри виçĕ пăт тăвар илнине курчĕ.

— Мĕн тăван çакăн чул тăварпа?—тесе ыйтрĕ вăл.

— А, тыткалама ирĕкрех пултăр тетĕп. Купăста та ĕлкĕрчĕ ав, хĕллене пĕр·ик шетник тăварласа хурас,—терĕ ăна Энтри.

„Суять ку,—тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнче Кăпитун.—Ахаль мар вăл çакăн чул тăвар илет“.

Вăл лавкара тăвар юлнă-юлманнине тĕрĕслемесĕрех тухса шăвăнчĕ. Çул çинче чыкаркă чĕркесе ярсан, кăшт чарăнса тăмалла пулчĕ ун, мĕншĕн тесен шăрпăк илме маннă. „Ай, пуçана панче тивертĕп-ха“ тесе утрĕ вара пуçанăшĕ патне.

— Шăрпăкна пар-ха, пуçана!—терĕ вăл, унта çитсен.

— Карнисра-и, карчăк, илсе пар!—терĕ пуçанăшĕ.

— Шăрпăк пĕтнĕччĕ-ха пирĕн, паян кайса илес тесех ирттерсе ятăм,—терĕ пуçанăшĕн арăмĕ.

— Шăрпăк сирĕн те пĕтнĕ-и?—тесе ячĕ Кăпитун хыпаланса.

— Тата камăн пĕтнĕ?—терĕ пуçанăшĕ.

— Лавкара та çук. Темĕскер тата тăвар нумай илеççĕ. Хатĕрлемелле мар-ши кирек камăн та.

— Эй, аташса лар!—терĕ пуçанăшĕ.—Тăвар хăçан пĕтни пур вăл? Шăрпăкне те ĕнер темĕн чухлех тиесе килчĕç.

— Эй, пуçана, хатĕрлени пăсмасть! Çăкăр ыйтмасть вĕт вăл. Айда станцăна кайса килер!

— Тăваршăн станцăна çӳретĕп-и? Çук, пулмасть. Халь колхозра мĕн чухлĕ ĕç, ĕçлетĕп луччĕ, ĕçкунĕ тăватăп.

Пуçанăшĕ ăна итлемерĕ. Çапла вара вăл станцăна пĕчченех тухса карĕ те халĕ те килмест. Аптăранă енне арăмĕ арласа та пăхать, çăм та чавать, ăна-кăна тытать, анчах ĕç патне алă пымасть, шухăш Кăпитун çинчен каймасть.

Вăл чӳрече патĕнче минтĕресе ларчĕ. Вăхăт чылай çĕрле. Ыйăх вĕçсе кайнă. Çав вăхăтра пĕри чӳречерен килсе шан шан-шан! шаккарĕ.

— Уç!—тенĕ сасă пулчĕ кун хыççăн.

— Хайхи çитрĕ. Ăçта сĕтĕрĕнсе çӳрерĕ-ши ĕнтĕ?—тесе, упăшкине уçма тухрĕ вăл.

— Кĕр! Шăрпăк илме кайнă япала ăçта çӳрерĕн ку таранччен?—терĕ вăл упăшкине, кĕсĕналăкне уçса.

— Хапхана уç!—терĕ упăшки.

— Ак япала, эсĕ лавпах-и? Мĕн тиеме кайрăн вара çав териех? Колхозăнне-и? Апла пулсан, çавăнтах пушатмаллаччĕ.

— Ну, ну, ан лĕпĕртетсе тăр, уç!—терĕ упăшкин аслати пек сасси.

Лавне лаç умне тăратрĕç.

— Мĕн ку сан?—терĕ татах арăмĕ.

— Мĕн ку та мĕн ку, хăлхана йĕрĕнтертĕн! Кил, лаçри пӳлмене пушатăпăр.

Вĕсем пĕр мишукне йăтăрласа йăтса кĕчĕç те çăварне салтса ячĕç. Пӳлмене тăвар шапăртатса юхрĕ. Лава пушатса пĕтерсен, 17—18 пăт тырă вырнаçмалли пӳлмене пĕтĕмпех тулчĕ.

— Мĕн тăван çакăн чул тăварпа?

— Купăста тăварлама!—терĕ Кăпитун кĕскен.

— Тьфу! Вара кун чул тăвар пĕтĕм ял купăстине тăварлама çитет вĕт. Ăçта кайса тиенĕ-ха тата хамăр лавкара та темĕн чухлĕ тăвар.

— Эп ялта çук тесе. Ну, вăл хатĕрлени пăсмасть.

Тепĕр кунне Кăпитун каллех çавăн пек килçуртра кирлĕ таварсене тиеме тухса каясшăнччĕ. Анчах çăмăр витререн янă пек тăкса антарчĕ те кӳлнĕ лашана каялла тăварса леçмелле пулчĕ. Çавăнтах тата ăна пухăва килсе чĕнчĕç.

* * *

Çутăлас енне кайнă ĕнтĕ. Анчах Кăпитун нимепле те çывăрса каяймасть. Çăмăр çунă сасă хăлхаран каймасть. Паянхи пухура илтнĕ сăмахсем пуçа çавăраççĕ. Молотов радиопа пĕлтернĕ сăмах çинчен калаçнă вĕсем унта.

— Чăнахах çав, ахалех аташса çӳрерĕм,—мăкăртатса выртать Кăпитун,—халь хамăр лавкана та темĕн чухлĕ тăвар килсе тулнă.

Кăпитун çутăласпа тин çывăрса карĕ. Сехет пек çывăрсан, ăна арăмĕ вăратрĕ.

— Тăвар тиеме мар, инкек тиеме кайнă эсĕ! Тьфу! Никама систермесĕр каять те—ырăшăн çӳрет-и вăл. Кам пур çавăн пек ухмах...

— Мĕн пулнă?—терĕ Кăпитун вырăн çинчен тăрса.

— Лаçа шыв аннă!

— Вара?

— Шăтăк-шатăк пӳлмĕнтен тăвару юхса тухнă.

— Ну-у!

— Ну çав, ну! Инкеке сутăн илсе çӳретĕн!

Кăпитун ĕненмесĕр тухса пăхрĕ. Пӳлмери тăвар чăнах та çурри ытла юхса тухнă, халиччен сăра туса пурăннă лаç тăвар кӳлли пулса тăнă.

— Юрать тата, ĕнер каймарăм,—терĕ вăл ĕнсине хыçса.

**М. Аркай.**

## ПУÇА КИЛНĔ ШУХĂШСЕМ

*Хăш-хăш учрежденисенче ĕç сахаллипе аптракансен те помощникĕсем пулаççĕ.*

— —

*Хупăсăр арчара япаласем хаклисемех пулмаççĕ, сӳпĕлтетекен çăвартан та сăмах-шухăшсем путлисемех тухмаççĕ.*

— —

*Ваттисем ахаль лараччен телефон тăрăх та пулин калаçма хушнă.*

— —

*Хăшпĕрисен постановленийĕсем пурнăçа кĕмеççĕ, архива кĕреççĕ.*

— —

*Пуçа вырăнаçайманнине портфеле чиксе çӳре.*

**Ил-ус.**

# Тусан çинчен калаçни

Улатăрти „Красная Звезда“ столовăйĕнче нимĕн йĕрке те çук. Сĕтелсем çине витмен, пĕрмаях çÿпĕленсе тăракан урайне çынсем апатланнă чухне шăлаççĕ.

П. Михайлов ÿкерчĕкĕ.




— Хăçан пăрахăр-ши эсир çынсем çинĕ чухне урай шăлма? Тусан вĕçет вĕт.
**Урай шăлакан:** Çынсем кайса пĕтсенех пăрахатăп. Вĕсемсĕр мана ĕçлеме кичем.

---

## Помада

СТАРИК: – Хĕр, эпĕ сана час-часах хаçат çинчи объявленисене суйланисене куратăп.

ХĔР: — Тутана хитрелетмелли помада çĕнĕ йышши тухасса кĕтетĕп.

СТАРИК: — Кÿр-ха эппин хаçата! Тĕнчери ларутăру çинчен пĕлес. Эп сана вĕреиме кĕмелли институт суйлать тесе.

ХĔР: — Институт? Институтра пулнă эпĕ.

СТАРИК: — Хăш институтра?

ХĔР: — — „Институт косметики и гигиены“ текенниче.

П. К. Гет.

## Хĕлле те сивĕ

Ялანах çапла пулать: çулла—тулта пăчă, пÿртре сулхăн, хĕлле—тулта сивĕ, пÿртре ăшă. Анчах кăçалхи çанталăк пирĕн Ядринори (Етĕрне районĕ) почта уйрăмне йăлтах мăшкăласа пĕтерчĕ. Унăн çуртĕнче çулла та ăшăччĕ, уçă пĕрене хушăкĕсенчен тусанлă çил вĕрсе кĕретчĕ те йăлт пăчăхтарса яратчĕ. Халь акă çав пĕрене хушăкĕсене питĕричченех çанталăк пĕтĕм йывăççен çулçисене çаратса пĕтерчĕ, çĕр питне юрпа витĕнтерсе хучĕ. Ку çеç те мар, почта уйрăмĕнчи кашни кирпĕчин хушăкĕнчен тĕтĕм кăларакан кăмакана юсасса та кĕтмерĕ вăл. Ÿкĕте кĕмест çанталăк: пирĕн почта уйрăмĕнче хĕлле те сивĕ!

Почтальон **Степанов М.**

# Инҫетрен килнӗ хӑна

Икӗ сехете яхӑн калаҫса лараҫҫӗ ӗнтӗ вӗсем. Килхуҫи арӑмӗ Совет Белоруссийӗнчен килнӗ ҫынна апат ҫиме лартрӗ. Ҫинӗ хушӑра та калаҫасси чарӑна пӗлмест. Белоруссия ӗҫҫыннисем паттӑр Хӗрлӗ Ҫара ҫӑкӑр-тӑварпа, чечексемпе хирӗҫ тухса илни ҫинчен пырать халь калаҫу.

Ҫисе тӑранчӗҫ. Хӑни килхуҫипе арӑмне ал тытса тавтӑвать.

— Манӑн ҫыру яма почтӑна кайса килмелле-ха,—терӗ вӑл юлашкинчен.—Тата... лавкара шӑл порошокӗ туянас. Апат хыҫҫӑн шӑл-ҫӑвара тасатмасан аван мар. Поезд ҫинчен аннӑ чух астуман, шӑл порошокне унтах хӑварнӑ.

Килхуҫи ун ҫине кӑн! пӑхса илсе калать:

— Ай-уй! Килни нумай пулмарӗ, эсӗ кайма шут тытнӑ. Пӗр-ик тавлӑк пурӑнмастӑн-и? Каялла таврӑнатӑни-ха вара?

— Таврӑнатӑп.

— Апла пулсан пӗр-ик ҫӑкӑр чикес пулать, сало тата тип ҫӑкӑра антарса ямалли ытти ҫимӗҫсем виҫӗ кун пурӑнмалӑх чикмесен ӳкӗнмелле пулӗ.

— Ма апла?—ыйтрӗ аякран килни.

— Почта ҫирӗм пилӗк ҫухрӑмра ларать. Ҫывӑхра ҫук. Шӑл порошокӗшӗн хулана кӗрсе тухма пӗр вӑтӑр ҫухрӑм тавра кайма тивет. Хулара ҫеҫ шӑл порошокӗ илме пулать. Ҫывӑхра сутмаҫҫӗ.

Совет Белоруссинчен пына ҫакна илтсен, пукан ҫине каялла кайса ларчӗ те:

— Паянах каяс мар пулӗ,—терӗ.—Темӗскер, пуҫ ыратать. Поезд ҫинче иртнӗ каҫ сахалрах ҫывӑрнӑ, ҫавӑнпа пулас. Поезд ҫинчен ансан, ҫитменне, лашапа килтӗмӗр. Ҫулӗ шутсӑр япӑх. Ывӑнтарса ҫитерчӗ...

— Пуҫ ыратать-и?!—хӑраса ӳкрӗ хӑналама юратакан килхуҫи.—Сиплес пулать, ахалӗн вӑраха кайма пултарӗ.

— Иртсе кайӗ-ха. Тухтӑр патне каяс. Порошок парсан пулӑшаканччӗ.

— Зоя!—чӗнсе илчӗ килхуҫи тӗпелте чашӑксем ҫуса тӑракан арӑмне.—Лав шырама кай-ха. Пирӗн хӑна тухтӑр патне кайса килесшӗн. Гродиксен икӗ лаша. Ҫавна каласа пӑхсан мӗнле-ши, кайӗ-ши?

— Лав? Ма лав?—ыйтать тӗлӗннӗ ҫын.

— Лавсӑр ӑҫтан вара? Хӗрӗх пилӗк ҫухрӑм каймалла. Виҫӗ вулӑса пӗр тухтӑр кӑна. Ҫуран кайма ан шухӑшла, мӗншӗн тесен эпир пансен пусмӑрӗ айӗнчен тухни ҫирӗм ҫул мар, ҫирӗм икӗ кун ҫитмест.

— Ҫук, ҫук! Лав шыраса ан чӑрманӑр. Тухтӑр патне каймасан та иртӗ-ха. Сирӗн аптекӑран аспирин илсе килетӗп те, шывпа хутӑш ӗҫсен лӑшах пулӗ...

— Аптека?—терӗ ӗнсине хыҫса килхуҫи.—Хм... Аптекӑна ҫитме вӑтӑр ҫухрӑм каймалла...

— Тьфу!—терӗ хайхи ҫын.—Килти пурнӑҫа кунтипе арпаштаратӑп. Ара пирӗн пасарлӑ, пысӑк ялсенче кӑна мар, пӗчӗккисенче те тем тӗрлӗ культурлӑ учрежденисем пур. Больница, аптека, вӑтам шкул, клуб, ача ҫуратмалли ҫурт, ачасен сачӗ тата ытти те, пурте пирӗн хамӑр ялтах е, хамӑр ялта мар пулсан, ҫывӑхри ялта.

— Эсир пансенчен хӑтӑлни ҫирӗм ҫул ҫав. Аван сирӗн. Ҫавӑнпа эпир Хӗрлӗ Ҫара ҫӑкӑр-тӑварпа, чечексемпе хирӗҫ тухса илтӗмӗр,—тесе вӗҫлерӗ килхуҫи.

**Ив. М-и.**

---

## ХАЛЬХИ АЧА-ПӐЧА



**Кӳршӗ арӑмӗ:**—Ма йӗрен, хӗрӗм?

**Хӗрача:**—Аннен бригади илнӗ ялава Марине инкен бригадине панӑ.

## ПӖЧӖК КАЛАҪУСЕМ

### Вӑтаннипе

Вӑрмачхӗрри Чурачӑкри (Комсомольски р-н) „Светлая жизнь" колхозӑн конюхӗсем лашасене начар пӑхаҫҫӗ.

— Каҫхине ҫывӑрман-шим ку ҫын, урапа ҫинче выртса пырать?

— Пирӗн колхозӑн конюхӗ вӑл. Хӑй пӑхакан лашинчен вӑтанса ҫывӑрнӑ пек туса пырать.

**И. Рубцов.**

### Мӗн ӗҫлени

Йӗпреҫ районӗнче 600 пуҫ сурӑх, 663 пуҫ лаша валли витесем ҫитмесҫӗ. Ҫилос хывас план ҫурри те тулман. (Хаҫатсенчен).

— Вите туса пӗтермен, ҫилос хывман, ҫулҫӑллӑ апатсем хатӗрлемен... Мӗн тӑвать-ши председатель?

— Вӑл-и? Вӑл ерҫмест.

— А мӗн ӗҫлет вара?

— Хӗллене хатӗрленесси ҫинчен тӗлӗк курать.

**Г. Валлер.**

---

# Сăмса айěнчи курăнмасть




*ИВАН ИВНИК*

## ХĂТАСЕМ

Юлташсем ман, çук хисепě,
Кěвěçеç.
Ма тесессěн саврăм эпě
Çěвěçе.
Пěрмече пěрет ман çěвěç...
Чуптума ун чух эп тивěç
Çěвěçе.
Юлташсем çўреççě темшěн
Тилмěрсе.
Ма тесен савать чěремçěм
Тимěрçе.
Тимěрне хěртет ман тимěрç...
Ыталап ун чух эп, чимěр,
Тимěрçе.
Юлташсем çўреççě тўртěн,
Ятлаçаç.
Ма тесессěн килěштертěм
Атăçа.
Атă калăплать ман атăç...
Ачашлап ун чух ытла та
Атăçа.
Халě хам та кунěн-çěрěн
Суйланап,—
Хăшěнпе пулас-ши хěрěн
Ялана.
Лăпкă мар чěрем пěрре те:
Ах, хăшне чěнем-ши, тетěп,
Хăтана?

---

Çěмěрлери „Большевик" завод юлашки уйăхсенче хăйěн производство планне 80—90 процент анчах тултарса пычě. „Хутмалли вутăсăр экстракт пěçерме пулмасть ěнтě",теççě пуçлăхсем. Анчах завод территоринче тем чухлех турпаспа юман хуйăрě саланса выртать. (Волков А. Я.).

**Дирекци çынни:** Вăрмантан вутă килни курăнмасть-и унта сана труба тăрринчен? Лайăхрах пăх-ха!

**Тюгашев** (вутă хатěрлекен контора пуçлăхě): Вутă килни курăнмасть, эсě турпас çине такăнса ўкни курăнать.

# Кашталăх йывăç мыскари

Калинино районĕнчи Кÿлхĕрри ялĕнчиултă çул каялла тума тытăннă клуба халĕ те туса пĕтермен.



— Татах чăрмав: эпир клуб çуртне туса пĕтерессиçинчен сÿтсе-явнă хушăра каштаāлăх йывăç çумне лартса хăварнă пурттăма ÿт илме те ĕлкĕрнĕ,—ниçтан та хăйпăтмалла мар!

---

## Кĕтмен çĕртен

Пĕр ирхине Анат-Ачакри (Советски р.) колхозăн председателĕ вырăн çинчен тăнă та чÿречерен пăхса тĕлĕнсех кайнă.

— Арăм, кил-ха кунта! Мĕне пĕлтерет ку?—тенĕ вăл кăмака умĕнче апат-çимĕç хатĕрлекен арăмне.

— Мĕн?—тенĕ арăмĕ, чĕннĕ çĕре пырса.

— Пăх-ха, темĕскер, ĕненмелле пек мар: каçхине выртнă чухне çуллаччĕ, хаĺь, ирхине, хĕлле пулса тăнă.

Çĕр çине чăнах тă шап-шурă юр витсе илнĕ. Мĕншĕн тĕлĕннĕ вара председатель? Мĕншĕн вăл тулта хĕлле пулнине ĕненесшĕн пулман?

Ахальтен мар. Хĕл мучин сухалĕ айĕнче сивĕ варкăшса тăнине сиснĕ вăл. Çав сивĕрен хăтăлас тесен, колхоз хутса тăмалли 12 кăмакана вут кирлĕ пулнă. Анчах вăл 12 пуленке вутă та хатĕрлемен.

Ф.

# Манăçлă çын

Степанов председатель тем çинчен питĕ хытă шухăшласа урампа иртсе пынă.

„Мĕн çинченччĕ-ха?.. Пăх-халь, аса килмест",— тесе мăкăртатса илнĕ вăл пырсан-пырсан. Вăл хăйне ялсовечĕн председательне лартнă чухне суйлавçăсем парса хăварнă наказăн хăшпĕр пункчĕсене аса илесшĕн пулнă. Анчах пĕри те унăн пуçĕнче тăрса юлман.

Çак вăхăтра пĕр колхозник пӳртĕнчен шкул ачисем тĕпĕртетсе тухнă.

— Вăт наказани, мĕн çинчеччĕ-ха...—тенĕ вăл татах, шкул ачисенчен ыйтнă пек, вĕсем çине пăхса.

— Мĕн пулчĕ?—тенĕ ăна çав вăхăтра пырса тăнă учитель.

— Вăт, темĕскер манса кайрăм, аса килмест те, килмест!—тенĕ председатель тарăхса.

— Сана эпир ун çинчен яланах астутарнă та,— тенĕ ăна учитель, унăн шухăшне пĕлнĕ пекех.

— Мĕн çинчен?

— Ытла час манатăн. Пирĕн ялта пуçламĕш шкул тăвасси çинчен наказ çинче пур вĕт?

— Чăнах, кăна та маннă çав эп—тенĕ председатель, пуçне хыпашласа.—Тата темĕскер çинчен пурччĕ-ха унта, çавна аса илейместĕп.

— Арман лартасси çинчен каланăччĕ тата,— тенĕ учитель.

— Ку та пур çав. Пăх-халь, пурне те манса пĕтнĕ, вăт эсрел пуçĕ!—тарăхса каласнă председатель.—Тата тем çинчен пурччĕ-ха унта, аса илеймĕн-ши?

Учитель унпа тек калаçса тăман, вĕсен урок пуçланнă. Председатель хăй çулĕпе утнă.

Ялсовечĕн пĕр пĕчĕк пӳртре вырнаçнă канцелярине те мăкăртатсах пырса кĕнĕ вăл. Кĕнĕ чухне пĕшкĕнсе кĕмелли алăк янахĕ çине пуçне, астăваймасăр тăн! тутарнă та „а-а!" тесе кăшкăрса янă.

— А-а!—тенĕ вăл, анчах пуçĕ ыратнипе мар.— Хăйхине тинех тупрăм, аран аса илтĕм!

— Мĕне? Мĕскер тупрăн?—ыйтнă унран тахçанах килсе ларнă секретарĕ.

— Паян мĕн тăнăранпах шухăшласа çӳретĕп, ниçтан аса илейместĕп вĕт мура. Ха, пуçа тăнлаттарсан тин аса илтĕм. Вăт мурилешшĕ!—хавасланса каласнă председатель.

— Мĕн-ха вара?—тенĕ секретарĕ, часрах пĕлесшĕн хыпаланса.

— Вара, наказ çине çырса хăварнăччĕ вĕт, ялсовет канцелярийĕ валли çĕнĕ çурт тумалла тенĕччĕ? Эпир ăна туман,—çавăн çинчен аса илеймесĕр çӳретĕп-çке.

Çапла Çĕрпӳ районĕнчи 2-мĕш Вăрманкасси ялсовечĕн председателĕ И. Степанов суйлавçăсем парса хăварнă наказсене çеç мар, вĕсене пурнăçа кĕртейменни çинчен те манса çӳренĕ.

Якку.

# Сивĕ

Шупашкарта пĕр Гортоп ятлă пысăк учреждени пур. Ку ĕнтĕ хулана хутса ăшăтакан тенине пĕлтерет. Анчах Шупашкар хули хĕлле пулса çитмен пулсан та ăшă мар. Хутте мĕнле çурта пырса кĕрсен те, çынсем çĕлĕкпе, пальтопа лараççĕ. Хăшĕ-пĕрисем шăнса пăсăласран чусăнккăсем те тăхăннă.

— Ой, сивĕ! Мĕнле хĕл касмалла?—тесе аллисене пальто çаннисен ăшне чикеççĕ

Ку чăн ĕнтĕ. Ăна хам та сисетĕп—сивĕ. Ăшăнас шухăшпа эпĕ Гортоп çуртне çитсе кĕтĕм. Çурт ăшĕнчен ăшшине кăларас мар тесе, алăкне пĕчĕккĕн уçса кĕтĕм. Пăхатăп—халăх туллиех. Пурте çĕлĕкпе те пальтопа. Хăшĕсем ăшăнас майпа чĕлĕм туртаççĕ; хăшĕсем каллĕ-маллĕ уткаласа çӳреççĕ. Хăйсем таçта кайма васкаççĕ.

— Мĕн тытса тăраççĕ пире кунта? Каясчĕ хăвăртрах,—тесе калаçаççĕ.

— Ăçта кайма пуçтараннă вара эсир кунта?—тесе ыйтрăм пĕринчен.

— Вăрмана вутă хатĕрлеме каймалла та, темшĕн ăсатмаççĕ...

— Кам ăсаттăр? Директор командировкăна тухса кайнă вĕт,—терĕ пĕри пире пӳлсе.

— Унăн заместителĕ пур вĕт.

— Заместителĕ? Вăл хăй те ним пĕлмест. Директор вырăнне çеç йышăнса ларать,—терĕ тепĕр рабочи куларах.

— Ай сивĕ, часрах вăрмана каясчĕ! Унта хуть хутса ăшăнма вутă пур,—тесе каллĕ-маллĕ уткалаççĕ рабочисем.

Халĕ ĕнтĕ ăнланса çитрĕм. Гортоп директорĕ Кузнецов юлташ вутă хатĕрлес сăлтавпа командировкăна тухса кайнă. Иккĕмĕш эрне ĕнтĕ командировкăра пурăнать, анчах пĕр кубометр та вутă килмест. Хăй вырăнне заместитель туса Данилов юлташа лартса хăварнă. Вăл ним тӳма пĕлмесĕр аптăраса ларать. Рабочисене хăш вăрмана вутă хатĕрлеме ăсатассине те пĕлмест.

Октябрĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинче пурĕ 250 кубометр вутă хатĕрленĕ. Ытти 50 пин кубометрне хăçан хатĕрлесе пĕтерессин палли çук.

— Çанталăк пит начар тăрать. Çавăнпа вутă хатĕрлеме май çук,—тесе ответлет директор заместителĕ Данилов.

Сивĕ. Ăçта пулнă-ши çак бюрократсем çанталăк ырă тăнă вăхăтра?

Ах, мансах кайнă. Çулла вĕт вутă кирлĕ мар. Ун чухне хĕвел ăшшипе те ăшăнатăн.

М. Данилов-Чалдун.

Секретарь и вып. редактор И. Илларионов. Зам. отв. редакт. В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сдано в производство 23/X-39 г. Подписано к печати 26/XI-39 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1288. Заказ № 658

Формат бум. 58×84¹/₈. Объем 2 п. л. Тираж 4250 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ", г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР

Хакĕ 20 пус.




## Ӳлĕмхи Шупашкарта

— Экскурсипе ăçта çити каятăр?
— Хула хĕрринчи Лермонтов урамĕнче халĕ те ларакан пĕр хутлă çурта курма.